Вырма – 2006 тата “Трактор” операци

# Çĕнĕ тырă хăрушсăрлăх ыйтать



ЧР Патшалăх техника надзор инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Дмитриев (сулахайри) ĕç çире хăрушсăрлăха пăхăннине çирĕп тĕрĕслерĕ.

Чăваш хресченĕ çулталăк тапхăрĕсене авалтан ĕçе кура пайланă, ятне панă: ака уйăхĕ, çĕртме уйăхĕ, авăн, юпа... Вырма тапхăрне вара çĕр ĕçченĕ çурла уйăхĕ тесе хисепленĕ. Çак тапхăр ответлăхне туйса вăл ку ĕç çине питех те яваплă хатĕрленнĕ. Çичĕ хут тар юхтарса ӳстернĕ тырă-пулăна хирте хăварас темен çĕр ĕçченĕ – хирти пӳлмери мар.

Епле пырать-ха вырма? Çĕр ĕçченĕ çак ответлă тапхăрта хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçлет-и? Ертӳçĕсемпе ответлă специалистсем уй-хирти ĕçе контроллесех тăраççĕ-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса иртнĕ тунти кун, августăн 14-мĕшĕнче, пирĕн районти “Герой” тата “Свобода” ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи вырма ĕçĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне А. Иванова тата районти патшалăх техника надзор инспекцийĕн инженер-инспекторне С. Николаева явăçтарса Чăваш Республикин Патшалăх техника надзор инспекцийĕн пуçлăхĕ В. П. Дмитриев, асăннă инспекцин районсенчи инженер-инспекторĕсен ĕçне пăхса тăракан А. Столяров Чăваш телевиденийĕпе килсе тĕрĕслесе “сенкер экран” валли передача ӳкерсе кайрĕç.

– Ахальтен суйласа илмерĕмĕр эпир сирĕн района. Кашни çулах техникăна хĕллехи управа лартассипе ырă тĕслĕх кăтартакан “Герой” кооперативра тата çĕнĕ техника туянассипе малтисен ретĕнчи “Свобода” хуçалăхра малашлăха пăхса ĕçлени пире тахçанах паллă. Çав тимлĕх асăннă хуçалăхсенче ĕç çи вăхăтĕнче палăрать-и? Паянхи тĕрĕслев хыççăн çирĕплетсех калайратăп: ПАЛĂРАТЬ,– терĕ ЧР Патшалăх техника надзор инспекцийĕн пуçлăхĕ Владимир Павлович Дмитриев “хир карапĕсен” ĕç шавĕ витĕр.

Пĕтĕмĕшле ырă хак лайăх-ха, анчах унпа витĕнсе хăш-пĕр кăлтăксем çине куç хупас марччĕ. Паян район уй-хирĕсенчи вырмара 91 “хир карапĕ”. Вĕсенчен 8-шĕ хуçалăхсем хăйсене пулăшма айккинчен илсе килнисем. Ĕçлекен комбайнсем хушшинче 21 Дон, 15 Енисей. Ыттисем чылай кивелнĕ СК-5 “Нива” агрегатсем. Малалла тĕрĕсленĕ хуçалăхсенче тĕл пулнă кăлтăксем çинче чарăнса тăрар.

**Шурча.** “Герой” ял хуçалăх производство кооперативĕнче тĕрĕслев вăхăтĕнче пĕр комбайн çинче шыв сахал пулни, тепри дизель çăвĕ юхнипе вараланни, виççĕмĕшĕ çинче медицина аптечки механизаторсем усă курнипе “шĕвелни” куç тĕлне пулчĕ.

**Кашмаш.** “Свобода” хуçалăхра пĕр комбайн çинче шăпăр çукки, иккĕшĕн çинче шыв çителĕксĕрри, кунта та Шурчари пекех хăшпĕр комбайнерсен çумра механизатор удостоверенийĕ пулманни (удостоверенисем пачах çук тееймĕн: вĕсем техосмотр вăхăтĕнче пурччĕ те ĕç вăхăтĕнче документсем çухаласран тесе вĕсене механизаторсем çума чиксе тухман. Çакă йĕркене пăсмалли сăлтав мар) курăнчĕ.



Комбайнера пулăшакан Николай Макаров çĕнĕ тырăпа кăмăллă (“Герой”).

Ĕçсем кал-кал пыракан хуçалăхсенче те çак çитменлĕхсем вырăнлă пулни çĕр ĕçченĕсене чыс кӳменнине палăртрĕ В. Дмитриев. Кунта пĕр ырă пулăма та палăртса хăварас килет. Тĕрĕслевре пĕр комбайн çинчи медицина аптечки пушана пуçлани куç умне тухсан, “Герой” хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев çак çитменлĕхе тĕрĕслевçĕсем айккалла пăрăнничченех пĕтерме пултарни хуçалăх вырмана тĕплĕ хатĕрленнине çирĕплетрĕ çеç.

**Уйрăм сăмах пушар хăрушсăрлăхĕ пирки.** Вырма вăхăтĕнче пушарсем çулленех тухаççĕ: “хĕрлĕ автан” ытамĕнче тырă, улăм, ял хуçалăх техники çунса кĕлленет. Хĕрӳ ĕç çинчи çак инкексем хуçалăхсемшĕн пысăк çухату пулса юлаççĕ, хăйсем пирки хĕл кунĕсенче систереççĕ. Илер-ха çиçĕм çапасран сыхланассине. Кун пирки патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ çулленех асăрхаттарса-ыйтса тăрать пулин те, каланине шута хуманнисем пурăна-киле пысăк инкек умне тухса тăраççĕ. Çакна çирĕплетекен юлашки тĕслĕх. **Августăн 16-мĕшĕнче Юнкă ялĕнчи А. Селюшкин хуçалăхĕнче аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче кил хуçи телевизор пăхнă. Çĕрпе çыхăнтарман антена çиçĕме хăй патне туртнă. Çапла вара çиçĕм çапнине пурăнмалли çурт кĕлленчĕ.** Кăна мĕншĕн каларăм-ха? Сăлтавĕ – чылай хуçалăхсенче тырă упрамалли складсене, йĕтемсене, КЗСсене çиçĕм çапасран хӳтĕлеменни. Кунпа пĕрлех комбайнсем çинче пушар хăрушсăрлăх требованийĕпе 40 литр шыв, хăйăр, шăпăр, икĕ огнетушитель пулмаллине те манас марччĕ. Çакă вăл хаклă техникăна пысăк инкекрен сыхласа хăварма пулăшниех пулать.



“Герой” хуçалăхри Александр Михайлович Фадеев водитель хăйне çирĕплетсе панă ГАЗ-53 автомашинăпа 25-мĕш вырмана хутшăнать, хиртен йĕтем çине тырă турттарать.



29 çул “хир карапĕн” штурвалне хăй тытса пынă Николай Евдокимович Евдокимов 30-мĕш вырмана комбайнера пулăшакан пулса хутшăнать. Кăçал экипажăн пуçлăхĕ унăн ывăлĕ Юрий («Герой»).

...Автомашина хир тăрăх малаллаваскать. Хыçала вара çĕнĕ тырăран пушаннă уйсем, улăм урисем юлаççĕ. Инçетре “хурçă ут” кĕрхи çĕртме сухалать. Хĕвел анăçĕнчи хĕвел урисем çанталăк улшăнасса... Ытларах ĕлкĕресчĕ уяр çанталăкра.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



“Свобода” хуçалăхра кăçалхи вырмана çĕнĕ комбайнсенчен виçĕ “Енисей” тата икĕ “ДОН” хутшăнаççĕ.

Аграри ыйтăвĕсемпе

# В.ДЕНИСОВ
## ял пуласлăхне шанать

*Çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче ЧР Ял хуçалăх министерствинче журналист-аграрниксем РФ Патшалăх Думин Аграри ыйтăвĕсемпе ĕçлекен членĕпе, “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин ялти ĕçсен координаторĕпе Валентин Петрович Денисовпа иртернĕ пресс-конференцие хутшăнчĕç. Тĕл пулăва ЧР Правительствин вице-премьерĕ - ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев, физкультурăпа спорт министрĕ (вăлах – “Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн” регион уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ) Вячеслав Краснов хутшăнни пресс-конференцие Чăваш Ене çывăхарах турĕ.*

*Думăра аграри ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ тата Раççейĕн аграри юхăмĕн ертӳçисенчен пĕри пулнă май Валентин Петровичшăн, паллах, ял хуçалăхĕн çивĕч ыйтăвĕсем çывăх. Думăри ĕç-хĕлпе паллаштарнă май В. Денисов унта ял хуçалăх аталанăвĕ çинчен калакан саккун кăларма хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕ. Кунпа пĕрлех Федерацин çитес çулхи бюджетĕнче ял хуçалăхĕ валли кăçалхинчен кая мар укçа тенкĕ пăхса хăвармалла. Хăна шучĕпе “АПК аталанăвĕ” наци проекчĕ ял хуçалăхĕнчи çивĕч ыйтусен пĕр пайне çеç сирет. “Наци проекчĕ пултаруллă, хăюллă çынсене ялта хăйсене тупма, яланлăх ĕç пуçарма май парсан, çакă лайăх пулнă пулĕччĕ”,– терĕ ыйтусем çине хуравланă май Валентин Петрович.*

**– Хуçалăхсем уйрăм çын харпăрлăхне куçнă май унти техника шыв пăсланнă пек çухалнине, унчченрех тулли пулнă выльăх-чĕрлĕх комплексĕсенче çил выляние çум курăк ашкăрса ӳснине, витесемпе сарайсене ял çыннисем пĕрер кирпĕчĕн килелле сĕтĕрнине наци проекчĕ ура хурайрать-и?**

– Кунашкал лару-тăрăва ял çыннисен хăйсен чĕрисем витĕр кăларса шутласа илмелле, саккунлă майпа пурлăха харпăр хăй аллине тавăрмалла.

**–Пĕрлешӳллĕ е фермер, е килти хушма хуçалăхсем влаçшăн вырăнлăрах?**

– Кунта пĕрне хурласа теприне ырлама çук. Акă, çĕршывра туса илекен пахча çимĕçĕн 90, çĕр улмин 96, выльăх-чĕрлĕх продукцийĕн 47 проценчĕ – килти хушма хуçалăхсен тӳпи. Çапах та çĕнĕ технологисемлĕ малашлăх пысăк та çирĕп хуçалăхсенче çеç.

Тĕл пулу хыççăн Патшалăх Думин депутачĕ республикăри хăшпĕр хуçалăхсене те çитсе курасси çинчен пĕлтерчĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**


Пĕлтерӳсем. Объявления

Тăваттă пăрулавă хурашурă тĕслĕ ĕне (февралĕнче 5-мĕш пăруламалла) тата апрельте пĕрремĕш хут пăруламалли хурашурă тына сутатпăр. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Ярапайкасси ялĕ.
Тел.: 8-927-842-79-96.

ООО «Агрофирма «Рассвет» требуются главный бухгалтер с опытом работы и со знанием программы 1С бухгалтерия, водители.
Телефоны: 2-19-91, 8-905-198-15-75.

Продается трехкомнатная квартира в трехэтажном доме в центре с. Моргауши. Общая площадь 59 кв. м., 2 этаж, с балконом. Телефон имеется. Возможен обмен квартиры в г. Чебоксары.
С вопросами обращаться по телефону 2-21-62, желательно после 20-00 часов.

Продается а/м Газель «Фермер» 2000 г. Бензин – А-76+газовое оборудование.
Тел.: 8-906-381-25-10, 33-2-53 после 20-00.
1-2.

Продаю керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, шифер 7-8-миволновый, плоский, цемент, рубероид, ячмень 120 тонн. Требуется водитель на ГАЗ-53.
Тел.: 8-903-379-16-62, 8-960-308-28-01, 2-18-80.
2-2.

ООО «Моргаушсельхозхимия» требуются инженер-энергетик, водители автомобиля, трактористы-машинисты.
Оплата сдельная, премиальные выплаты.
2-2.

Продается дом деревянный 11х6,5 м., жилая площадь 65 кв. м., крыша оцинкованная, газовый котел, трубы, газовая плита, водяное отопление, трубы диаметром 76 мм на вывоз.
Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, д. 30.
Телефоны: 8-906-383-86-10, (241)34-3-10.
1-3.

ОАО «Моргаушский кирпичный завод» реализует:
кирпич керамический М 75-100 несортированный по цене 3953 рубля за 1,0 тыс. шт.;
кирпич керамический М 100 сортированный по цене 4130 рублей за 1,0 тыс. шт.;
кирпич керамический М 125 сортированный по цене 4602 рубля за 1,0 тыс. шт.;
щебень кирпичный по цене 531 рубль за 1,0 куб. м
Приглашает на постоянную работу электромонтеров, обжигальщиков, загрузчиков, садчиков, съемщиков, водителя автомобиля (КАМАЗ 55102), плотника.
Справки по тел.: 8(83541) 2-11-77, 2-16-38.
Адрес: Чувашия, Моргаушский р-н, с. Моргауши, ул. Восточная, д. 1.
2-3.

Реализуем зерно. Телефон: 52-3-35.



ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Зам. гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3320.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 18.08.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру А.П. БЕЛОВ.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.